**Хĕрпе каччă юрри**

- Савни, сана юратнипе мĕн парам эп:
Асăнмалăх кĕмĕл çĕрĕ халаллам-и?
- Ай-ай, савни, пит илĕртсе ан калаç-ха,
Юратнипе кĕмĕл çĕрĕ халаллаççи?

- Савни, сана юратнипе мĕн парам эп:
Çут çÿçеллĕ пурçăн тутăр халаллам-и?
- Ай-ай, савни, пит илĕртсе ан калаç-ха,
Юратнипе пурçăн тутăр çыхтараççи?

- Савни, сана юратнипе мĕн парам эп:
Виç хурталлă сатин саппун халаллам-и?
- Ай-ай, савни, пит илĕртсе ан калаç-ха,
Юратнипе сатин саппун халаллаççи?

- Савни, сана юратнипе мĕн калам эп:
Çумна ларса, пилĕкĕнтен ыталам-и?
- Ай-ай, савни, пит илĕртсе ан калаç-ха,
Юратнипе пилĕкрен çеç ыталаççи?
-
- Савни, сана юратнипе мĕн тăвам эп:
Çӳхе кăна тутăвăнтан чуптăвам-и?
- Ай-ай, савни, юрату сан чĕререх-мĕн.
Чупту эппин! Анчах асту... Çепĕçреххĕн...

1938

*Тукташ, И. Хĕрпе каччă юрри / И. Тукташ // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 221-222.*